## Чĕрепе суйланă сăвăсем

Петĕр Хусанкай куçарнă сăвăсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. (Туслăх ытамĕ. Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 1985). Ăна А. Хусанкай критик пухса хатĕрленĕ. Тӳрех калас пулать, хамăр чăваш культуришĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ, савăнтаракан событи пулчĕ çак кĕнеке кун çути курни.

Петĕр Хусанкай тăлмач ĕçне яланах хисеплĕ те ответлă тенĕ. Хăйĕн пĕр статйинче кун пирки вăл акă мĕн каланă: «...Куçару ытахальтен тумалли çăмăл ĕç мар, чылай çынсемшĕн вăл - пĕтĕм пурнăç шăпи. Мĕншĕн тесен тата вăл - пысăк культура ĕçĕ, патшалăх ĕçĕ, политика ĕçĕ». Чаплă сăвăç куçарнă произведенисем çак сăмахсен чăнлăхне тӳрре кăлараççĕ.

«Туслăх ытамĕ» кĕнекене хамăр çĕршыври тата чикĕ леш енчи халăхсен вуншар поэчĕн сăвви-поэмисем кĕнĕ.

«Пысăк культура» тенĕрен, поэт куçарăвĕсен кĕнекине ăнсăртран кĕрсе кайнă сăвăсем çук. Поэт куçару урлă та калама пултарать-çке-ха хăйĕн шухăшĕсене. Акă, сăмахран, карелофинсен эпосне «Калевалăна» илер. Унăн сыпăкĕсене П. Хусанкай Юман Мĕтрипе пĕрле куçарнă. Ку ĕçе тăлмачсем чăваш эпосĕ (Улăп) çинчен пичетре хĕрсе калаçнă вăхăталла пикеннĕ пулас. Çав калаçăва С. Элкер, С. Лашман тата ыттисем те хутшăннă, чăваш эпосне çырас ĕмĕтпе хĕмленнĕ. Çак енчен пăхсан, вăл вăхăтра «Калевала» чăваш эпосне йĕркелесе çырмалли тĕслĕх пулма пултарнă ĕнтĕ.

Хусанкай вырăс классикин тĕнче культуринчи тӳпипе пĕлтерĕшне витĕр курса тăнă. А. Пушкин, М. Лермонтов, А. Блок, А. Ахматова тата ытти чаплă поэтсен пултарулăхĕ Хусанкая яланах хавхалану кӳнĕ. Поэзин йăлттам тĕслĕхĕсене куçарнă май Хусанкай хăй пултарулăхĕн хăват-мехелне те тĕрĕсленĕ. Пушкинăн «таса» лирикине вăл авторĕпе

ăмăртса тенĕ пек куçарнă, чăваш чĕлхин пиçĕлĕхпе çепĕçлĕхĕ, ун ытарайми кĕвви-çемми ытти чĕлхесенчен кая пулманнине çĕнĕрен çирĕплетсе панă. Акă çав куçарусен тĕслĕхĕсем: «Чаадаева», «А. П. Керн патне», «Сăрт-туллă Грузире каçхи тĕтре выртать...», «Арион», «Тăван çĕре ытараймасăр...»

А. Пушкин хыççăн М. Лермонтов сăввисен таса кĕмĕл сасси пек кĕввипе киленетпĕр. Ку кĕнекере - икĕ ăмăрт çунатлă поэт, расна поэзи тĕнчи, стиль туртăмĕсемпе тĕсĕсем... Анчах та хăшĕ вĕсенчен Хусанкая çывăхрах? Пушкин сăввисенче гармониллĕ тĕнче туйăмĕ, киленĕçлĕ çутă вылявĕ, ырра шанса, ун патне туртăнни тыткăнлаççĕ. Лермонтов сăввисене вара чĕрене касакан тунсăх витернĕ, кăнтăрлахи хĕвел çути мар, чĕркĕмĕл сапакан уйăх çутиллĕ каç хуçаланать тейĕн кунта; поэт пурте йышăннă чăнлăха чун витĕр кăларса тепĕр хут тĕрĕслет, иккĕленет е пăрахăçлать. Уйрăмах туслăхпа юрату лирикин йĕркисенче сисĕнеççĕ çав хĕрӳ кăмăл-туйăм палăрăмĕсем. Этемĕн чи сăваплă тивĕçĕ - Гражданин пуласси, тăван халăхăн кунçулĕпе пĕрлешесси, ун ирĕкĕшĕн кĕрешесси.

Хусанкай оригинал кĕввипе ритмне тĕп-тĕрĕс, вырăслинчен пĕртте чакармасăр куçарма мехел çитернĕ. Чăваш поэчĕн творчествăлла тавракурăмĕ анлă, уншăн Пушкин поэзийĕн илем тĕнчи те, Лермонтовăн кăткăс стилĕ те пĕр пекех çывăх.

А. Блокăн «Вуниккĕн» поэмине куçарнă май, Хусанкай хăй пултарулăхĕн эпикăлла сулăмне туллин палăртнă. Кунта В. Маяковский шкулĕ çеç мар, пĕтĕм тĕнче поэзийĕн опытне ăша хывни те сисĕнсе тăрать. Калама çук пысăк поэзи культурине чăваш чĕлхипе, чăваш сăввин тытăмĕпе пĕр кĕвве килтерет вăл, кивĕ тĕнчене тĕпрен кисрентернĕ революци тăвăлне, ун чĕрĕ сывлăшне туйтарать вулакана.

Эпика пирки калас пулсан, Грузи поэчĕн Шота Руставелин «Тигр тирĕ тăхăннăскер» поэмин сыпăкĕсене куçарнинче лайăх палăрать поэт хевти.

Хусанкая чăннипех те хамăр чăваш культурин элчи темелле. Тăван çĕршывăн кашни кĕтесĕнчех унăн çывăх тусĕсем пулнă, вăл вĕсемпе çыру çӳретнĕ, çитсе курнă, çырнисене куçарнă. Çавăнпа та ĕнтĕ кĕнекери куçарусен географийĕ тĕлĕнмелле анлă. Çак пĕр пысăк ушкăн çăлтăр картинче украинпа белорус, Кавказпа Балтика тăрăхĕнчи халăхсен поэчĕсен сăввисем хăйне май илемлĕ тĕспе çиçеççĕ. Хусанкай али витĕр пулса çитнĕ поэзи тĕслĕхĕсем çеç сăрхăнса тухнă темелле - шутсăр тиркевлĕ куçпа суйланă вĕсене Европа культури шайĕнчи поэт. Çеçпĕлĕнни пек интернационализмла тарăн шухăш-туйăмпа вуншар поэта пĕр-пĕринпе çывăхлатнă вăл.

Поэзи - халăх чунне упракан сӳнми вучах. Паллах, тăван чĕлхене çĕршер çул хушши шăрантарса пиçĕхтерекен, туптакан ăстасем те чăн малтанах поэтсем. Ансăртран мар пулĕ тăван сăмах, тăван чĕлхе теми кĕнекере пĕр пысăк темăсенчен пĕри пулса тăрать. Украина поэчĕ Павло Тычина калашле, «чĕлхе вăл - ĕç, çын - терчĕ, тарĕ, вăл - пирĕн пĕртăванлăх туйăмĕ». Мĕн тери тарăн шухăш хывнă çак сăмахсене. Çав «пĕртăванлăх туйăмĕ» тăван сăмаха, анне чĕлхине хисепленинче лайăх палăрать. Ун пирки чăн-чăн интернационалист Расул Гамзатов «Тăван чĕлхе» сăввинче ытарлă майпа, тĕлĕкĕнче курнăн, акă епле çавăрса калать. Вилме выртнă поэт - тăр-пĕччен. Хĕвел çути те, шанчăк та лапах сӳннĕ уншăн. Акă, кĕтмен çĕртен вăл çывăхрах çынсем «шăкăлтатса иртнине» илтет. Аварла пуплеççĕ иккен:

Тăван чĕлхемĕн çеммине илтсессĕн,
Эп чĕрĕле пуçларăм çавăнтах.
Ăнлантăм: тухтăр кирлĕ мар чĕртмешкĕн.
Асамăç мар чĕртет, - тăван сăмах.

Такамшăн сиплĕ ют чĕлхех,

пăхсассăн,

Мана унпа пӳрмен кĕвĕлеме.

Тăван чĕлхем ыран пĕтес

пулсассăн,

Эп хатĕр паянах çĕре кĕме.

Пĕрре пăхсассăн темле трагедиллĕ кĕвĕ янравĕ пур пек çак йĕркесенче. Çапах та авторăн тарăнрах сийри шухăшĕ шанчăкпа тапса тăрать: пĕтмест-ха тăван чĕлхе. Ма пĕттĕр вăл тус-тăванла йышра килĕштерсе пурăнакан авар е чăваш халăхĕсен чĕлхи! Хальхи вăхăтра вĕсене аталанмалли пур майсем те çителĕклĕ. Ахальтен мар пулĕ Хусанкай хăйне çывăх поэтсен Тăван çĕршывпа тăван халăхне, тăван чĕлхине аслăлатса мухтакан сăввисене чылай куçарнă. Белорус поэчĕ Янка Купала «Тăван çĕршыв» сăввинче хăйне майлă хускатать çак пысăк пĕлтерĕшлĕ темăна. «Эп хам çĕршывăмăн пĕр пĕчĕкçеççĕ пайĕ, усратăп чĕремре ун çăлтăр çутине», - тет вăл. Тутар поэчĕ Ахмед Ерикей те çак шухăша тупа тунă евĕрлĕ калать:

Пĕр нимĕскер те кирлĕ мар,

Кермен, ман ятшăн ан хăпар:

Шăпам, çуралнă çĕрĕмрен

Уйрăлма кăна ан пар!

Кашни поэт кунçулĕ мĕн ачаран тăван енпе, харпăр хăйĕн «пĕчĕк çĕршывĕпе» тачă çыхăннă. Çав çĕрсемпе шывсем чăмăртанса аслантараççĕ те ĕнтĕ чи пысăк та мăнаçлă Тăван çĕршывăмăра.

Кĕнеке ăшчикне ют çĕршыв классикĕсен сăввисем те пуянлатаççĕ, çĕнĕ тĕс кӳреççĕ. Авторĕсем - тĕнчипе паллă ятсем: Виктор Гюго, Адам Мицкевич, Юлиан Тувим, Иржи Волькер, Назым Хикмет, Николас Гильен тата ыттисем те.

«Туслăх ытамĕнчи» тепĕр хитре ярăма авалхи тус-тăванăмăрсен - пăлхар поэчĕсен - сăввисем кĕнĕ. Поэтсенчен чылайăшĕпе Хусанкай туслă пулнă, пĕрре çеç мар хамăрпа (чăвашсемпе) пĕр тымартан тухнă пăлхарсем патне кайса çӳренĕ. Пăлхар чĕлхине те çине тăрсах вĕреннĕ. Çавна пула ĕнтĕ вăл Христо Ботев, Пейо Яворов, Димитр Осинин, Элизавета Багряна, Ламар, Ангел Тодоров, Младен Исаев, Никола Вапцаров сăввисене тӳрех чăвашла куçарма пултарнă. Димитр Осининăн «Кĕреке сăмахĕ», Ламарăн «Атăл», Младен Исаевăн «Асаттесем» сăввисене вулатăн та çак поэтсем тăванлăх туртăмне пысăка хурса хакланине, çав туйăм мăн асаттесен юнĕнче пулнине тепĕр хут ăнланса илетĕн. Акă епле ăшшăн пуç таять Ламар авалхи пăлларсен чĕлхипе культурине упраса хăварма пултарнă чăваш çĕрнешывне, халăхне:

Пăлхар аслашшĕсем çак Атăл урлă
Каçса сиктернĕ йышлă урхамах,
Хула туса хăварнă, - тет юмах, -
Пăлхар хули, ун ячĕ Болград пулнă.
Ун пек хула кунта та пулнă, теççĕ,
Вăл тĕлĕкри пек тĕрленет асра.
Чăваш юрри ун тӳсĕмне усрать.
Пинçуллăх кĕввисем халь илтĕнеççĕ...
Легенда пĕлтерет: чăваш -
пăлхар вăл,
Эпир пĕр халăх пулнă ĕлĕкрен;
Хаваслăх, хурлăх, юрă - пĕр тĕпрен.
Салам сана, Тăван çĕршывăм - Атăл!

*(«Атăл».)*

Куçару ăсталăхĕ, пысăк культурăллă поэт алли «Туслăх ытамне» кĕнĕ кашни сăвăрах сисĕнсе тăрать. Кĕнекене вуласа тухсан, кулленхи

куҫару практикипе ҫыхӑннӑ ҫивӗч ыйтусем тавра шухӑша каятӑн. Илемлӗ литература журналӗсем, «Тӑван Атӑлпа» «Ялав», тӑтӑшах куҫарса пичетлеҫҫӗ ытти халӑхсен поэчӗсене. Чылай чухне пӗр-пӗр юбилей е культура кунӗсемпе тӗл килет ҫак ӗҫ. Анчах та темшӗн-ҫке ҫав куҫарусем, подшивкӑра упранмалли черетлӗ материал пек, йӗрсӗр ҫухалаҫҫӗ, хамӑр ҫырулӑх аталанӑвне витӗм параймаҫҫӗ. Хусанкай тӑван культура шайне, халӑх кӑмӑл-туйӑмне шута илсе, вӑл ыйтнине чӗрипе ӑнланса, суйласа куҫарнӑ тӑванла литературӑсен тӗслӗхӗсене. Халь пӑхатӑн та, поэт куҫарнисем чӑваш культурин ылтӑн ҫӳпҫине кӗме тивӗҫлӗ. Вӗсем чӑваш чӗлхи хевтипе, ун хавалӗпе ҫуралнӑ тейӗн малтанах. Хальхи хаҫат-журналта куҫарса пичетлекен кашни произведени пиркиех ҫапла калама май килсен, епле аван пулӗччӗ! Шел пулин те, ҫапла калама пултараймастпӑр-ха эпир халлӗхе. Ку ӗҫе ҫиелтен, васкаса тунине, куҫармалли материала тимлӗн суйламаннине час-часах асӑрхатпӑр-ха эпир. Ҫавна май Хусанкай сӑмахӗсем каллех аса килеҫҫӗ: «Куҫару ӗҫӗ - пысӑк культура ӗҫӗ, патшалӑх ӗҫӗ, политика ӗҫӗ». Ҫакна манни пысӑк йӑнӑш тунине пӗлтерет. Паянхи кунпа, ҫак самантпа, вӑхӑтлӑха пыракан виҫепе кӑна мар, хӑй пултаракан кашни япалана ӗмӗрлӗх шайӗпе хаклама тӑрӑшнӑ Хусанкай. Унӑн канӑҫсӑр чун-чӗри малашлӑха ӑнтӑлнӑ, ҫав малашлӑхра иртнӗ тапхӑрсен пӗлтерӗшне туйса тӑнӑ. Тутар сӑвӑҫин Хасан Туфанӑн ак ҫак йӗркисем чӑваш поэтне уйрӑмах ҫывӑх пулнӑн туйӑнать мана:

Емӗрлӗхӗн ак ҫак тӗлӗнче
Расна тӗспе ҫиҫет кашни ир,
Вӑл хӑварать ҫутӑ ылтӑн йӗр
Ҫӗршывӑмӑр ҫулӗ ҫийӗнче,
Емӗрлӗхӗн ак ҫак тӗлӗнче.

Хусанкай пек поэтсем хальхипе пуласлăх хушшинчи кĕпере хываççĕ. Пысăк поэтсен шăпи çавнашкал.